24-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1942
ФЕВРАЛЬ
19
КĔÇНЕРНИКУН
42(6067) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ.

Сывлăшран тапăннинчен сыхланас ĕçе вăйсăрлатмалла мар

Мирлĕ çĕршыва вăрă-хурахла тапăнса кĕнĕ Германи захватчикĕсене паттăр Хĕрлĕ Çар хирĕçле çапа-çапа аманттать. [illegible]

Тăшман çапах та вăйлă-ха. Вăл пирĕн малалла çĕнсе пыракан Хĕрлĕ Çар чаçĕсене контратакăсем тунипе тытса чарма тăрăшать. [illegible]

Çавăнпа та тăшман халран кайнă войскисене кăшт та канма памасăр, вĕсене тата та хăвăртрах хĕссе пыма кирлĕ. Тылпа фронт хушшинче çирĕп çыхăну пулсан, фронта кирлĕ пĕтĕм хатĕрсене тата та ытларах туса парсан [illegible]

Фронтра малалла пыракан Хĕрлĕ Çарăн çĕнтерĕвĕсем вăл хамăрăн тыла та тăтăш çыхăннă. [illegible]

СССР Совнаркомĕ отечественнăй вăрçă малтанхи кунĕсенчех пĕтĕм халăха тăшман сывлăшран тапăннинчен тата химилле тапăнусенчен сыхланмалли правилăсене 16 çултан пуçласа 60 çула çитнĕ çынсене пурне те обязательнăй йĕркепе вĕрентме хушнă. Çак постановление пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе хуласенче те, ялсенче те пысăк ĕçсем тунă. Осоавиахим организа[illegible]

[illegible] ПВХО нормисене пама [illegible] кружоксем [illegible] Осоавиахим [illegible] ПВХО [illegible]

Анчах та тылăн Осоавиахим организацийĕсем хăйсем çине хунă пысăк та ответлă задачăна вĕçне çитиччен туса пĕтерме те кирлĕ. [illegible] ПВХО нормисене пама [illegible]

Осоавиахим организацийĕсен, предприятисемпе учрежденийĕсен, çавăн пекех тата общественнăй организацисен руководителĕсен те тăшман сывлăшран тапăннинчен сыхланас тĕлĕшпе СССР Совнаркомĕ кăларнă постановление пĕтĕмпех пурнăçласа çитерес енĕпе татăклă мерăсем йышăнмалла. Пирĕн республикăра пĕр çитĕннĕ çын та, пĕр шкул ачи те ПВХО нормисене памасăр ан юлтăр.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

СССР Союзĕн Вооружени Наркомачĕн работникĕсене орденсемпе наградăласси çинчен

Хĕçпăшал туса кăларас тĕлĕшпе правительство панă заданисене кăтартуллăн пурнăçа кĕртнĕшĕн çаксене наградăлас:

ЛЕНИН орденĕпе—Соломон Савельевич **Гинденсена**—74-мĕш №-лĕ заводăн главнăй инженерне.

ĔÇЛĔХ ХĔРЛĔ ЯЛАВ орденĕпе—Дмитрий Федорович **Старзимскине**—69-мĕш №-лĕ заводăн главнăй инженерне.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1942 çулхи февралĕн 16-мĕш.

Оборона Халăх Комиссариатĕнче

136-мĕшпе 249-мĕш стрелковăй дивизисенчен, 1-мĕшпе 46-мĕш танковăй бригадăсенчен, артиллерин 301-мĕшпе 614-мĕш полкĕсенчен гвардейски чаçсем тăвасси çинчен

Пирĕн Совет çĕршывĕшĕн, нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан çапăçусенче 136-мĕшпе 249-мĕш стрелковăй дивизисем, 1-мĕшпе 46-мĕш танковăй бригадăсем, артиллерин 301-мĕшпе 614-мĕш полкĕсем хăюллă та паттăр пулнине, дисциплинăллă тата организованно пулнине кăтартрĕç. Нимĕç захватчикĕсене хирĕç тапти-сыпписĕр çапăçса, вĕсем фашистсен войскисене пысăк çухатусем кӳчĕç, аркатмаллăх пыра-пыра çапнине противникăн тĕрĕ вăйĕпе техникине пĕтерсе пычĕç, нимĕç захватчикĕсене нимĕн шеллемесĕр аркатса çĕмĕрсе пычĕç.

Тăван çĕршывшăн, нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан çапăçусенче çирĕплĕхпе паттăрлăх кăтартнăшăн, дисциплинăллă та организованно пулнăшăн, çав соединенисен личнăй составĕ çапăçусенче геройлăх кăтартнăшăн çулте асăннă дивизисенчен, бригадăсемпе полкĕсенчен гвардейски чаçсем тунă. Указăн кĕсек:

1) 136-мĕш стрелковăй дивизирен — 15-мĕш гвардейски стрелковăй дивизи. Дивизи командирĕ — полковник **ВАСИЛЕНКО.**

2) 249-мĕш стрелковăй дивизирен — 16-мĕш гвардейски стрелковăй дивизи. Дивизи командирĕ — генерал-майор **ТАРАСОВ.**

3) 1-мĕш танковăй бригадăран—6-мĕш гвардейски танковăй бригада. Бригада командирĕ—полковник **ХАСИН.**

4) 46-мĕш танковăй бригадăран—7-мĕш гвардейски танковăй бригада. Бригада командирĕ —танковăй войскăсен генерал-майорĕ **КОПЦОВ.**

5) Артиллерин 301-мĕш полкĕнчен — артиллерин 10-мĕш гвардейски полкĕ. Полк командирĕ — полковник **ГРИШИН.**

6) Артиллерин 614-мĕш полкĕнчен — артиллерин 11-мĕш гвардейски полкĕ. Полк командирĕ — майор **КАРАЧАРЦЕВ.**

Асăннă дивизисене, бригадăсемпе полксене гварди ялавĕсем параççĕ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Февралĕн 17-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Февралĕн 17-мĕшĕнче пирĕн войскăсем, противника хирĕç наступленилле çапăçусем туса пырса, малалла куçнă, халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ.

Февралĕн 16-мĕшĕнче сывлăшри çапăçусенче нимĕçсенне 17 самолет, зенитнăй артиллерирен персе 1 самолет ӳкернĕ тата тăшманăн аэродромĕсем çинче 5 самолет пĕтерсе тăкнă. Пирĕн 10 самолет пĕтнĕ.

Февралĕн 17-мĕшĕнче Мускав патĕнче нимĕçсен 2 самолетне персе антарнă.

* * *

Февралĕн 16-мĕшĕнче пирĕн авиаци чаçĕсем нимĕçсен 22 танкне, 3 бронемашинине, 46 полевой орудине, 22 минометне, войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 300 автомашинине, боеприпассем тиенĕ 120 лавне, зенитнăй пулеметсен 3 точкине пĕтерсе тăкнă тата сиенленĕ, боеприпассен складне взрыв туса сирпĕнтернĕ, чугунçул çинчи 11 вагона çĕмĕрнĕ, темиçе вырăнта чугунçула пăснă, противник пехотин 4 батальонне саплаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Пĕр гвардейски мотострелковăй чаçри боецсем (Хĕвеланăç фрончĕ), противника Захарово ялĕнчен хăваласа кăларса, тăшманăнне 8 оруди, 6 миномет, 10 пулемет, 450 винтовка, 70.000 патрон, 150 ещĕк мина, 1000 ракета тата ытти трофейăсем тытса илнĕ. Гитлеровецсем пысăк çухатусем тӳснĕ. Тепĕр участокра Терентьев юлташ командир пулса ертсе пыракан часть П. ялĕшĕн пынă çапăçура тăшманăн салтакĕсемпе офицерĕсене 160 çынна пĕтерсе тăкнă. Çав çапăçура пирĕн 7 боец пĕтнĕ. Çав чаçри разведчиксен группи, тăшман çине çĕрле кĕтмен çĕртен пырса тапăнса, тăшманăн 3 салтакне тыткăна илнĕ, 25 салтакне вĕлернĕ.

* * *

Кăнтăр-Хĕвеланăç фрончĕн участокĕсенчен пĕринче кĕрешекен пирĕн артиллеристсем нимĕç захватчикĕсен чĕрĕ вăйĕпе техникине пысăк çухатусем кӳреççĕ. Артиллеристсем пĕр кун хушшинчи çапăçусенче тăшманăн 10 орудине, 12 пулеметне, 10 минометне пусарса лартнă тата 4 танк, 3 оруди, 9 станковăй пулемет, 11 миномет пĕтерсе тăкнă, противникăн çĕрпе йывăçран купаласа тунă 21 огневой точкине çапса аркатнă. Орудисенчен персе, нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 700 çынран кая мар пĕтерсе тăкнă.

* * *

Виçĕ красноармеец-автоматчик Миссков, Владимирский тата Жулин юлташсем, противникăн контратака туса хăтланакан пехотине хăйсем патне çывăха янă та нимĕçсем çине пеме тытăннă. Нимĕçсем хăйсен вилнĕ тата аманнă 50 салтакне пăрахса хăварса каялла чакнă.

* * *

Смоленск партизанĕсен В. юлташ командир пулса ертсе пыракан отрячĕ гитлерла захватчиксене нимĕн хĕрхенмесĕр пĕтерсе пырать. Нимĕç салтакĕсем яла пыракан çул çинче нумаях пулмасть партизансен отрячĕ засада тунă. Партизансем çулăн уйрăм участокĕсем çине минăсем хурса тухнă та нимĕç пехотин колоннине пулеметсемпе пăшалран вăйлăн пенипе кĕтсе илнĕ. Çул çинче тăшманăн виллисем выртса юлнă, çар пурлăхĕсем тиенĕ 13 лава партизансем хăйсемпе пĕрле илсе кайнă. Нимĕçсен фашистла оккупанчĕсене хирĕç пулнă темиçе çапăçура кăна В. юлташăн партизанла отрячĕ нимĕçсен 149 салтакне, 9 офицерне, 5 автомашинине, бензин тултарнă 3 автоцистернине пĕтерсе тăкнă, 31 винтовка, 2 пулемет, 4 автомат тытса илнĕ. Партизансем тăшманăн тылĕнчи 19 кĕпере взрыв туса сирпĕнтернĕ.

* * *

Нимĕçсен 189-мĕш пехотнăй полкĕн командирĕ подполковник Рейнгольд Прюске шăнса вилес патне çитнĕ салтаксен ушкăнĕпе красноармеецсене тыткăна парăннă. Прюске çапла каласа панă:

«Декабрь уйăхĕнче 186-мĕш полка Францирен питĕ васкавлăн Совет Союзĕпе Германи хушшинчи вăрçă фронтне куçарчĕç. Январь уйăхĕнче эпир Андреаполе çитрĕмĕр те Пено хулине тытса илесси çинчен приказ илтĕмĕр. Малтанхи çапăçурах полкăн личнăй составĕ 80 процента çити пĕтрĕ. Командирсен составĕ пĕтĕмпе тенĕ пекех стройран тухрĕ. Пулеметсемпе минометсене тытса илчĕç, совет танкĕсем таптаса лапчăтрĕç. Полкăн юлашкийĕсем тарса пĕтрĕç е тыткăна парăнчĕç. Эпĕ 46 çынран тăракан отрядпа пĕрле вăрмана тартăм. Январĕн 20-мĕшĕнче шăнса тата выçăпа аптраса 8 çын вилчĕ. Январĕн 21-мĕшĕнче пирĕн каллех 14 салтак вилчĕ. Тепĕр кунне отрядра 13 çын кăна тăрса юлчĕ. Январĕн 23-мĕшĕнче татах 2 салтак вилчĕ, иккĕшĕ ухмаха ерчĕç. Çав кунах эпĕ юлашки 9 салтакпа пĕрле çывăхри яла пытăм та тыткăна парăнтăм».

* * *

Орел облаçĕн Мценск районĕнчи Лапашкино ялĕнчен тарнă чухне нимĕçсем пур колхозниксене те çаратса тухнă, унтан пур çуртĕсене те вут тивертсе хăварнă. Стариксемпе хĕрарăмсем тата ачасем уй варрине сивĕ çĕре тăрса юлнă.

* * *

Иркутскри Куйбышев ячĕпе тăракан заводри инженер Лапин тимĕрçĕ лаççинчи кăмакана реконструкциленĕ. Халĕ туса кăларнă продукцин кашни тонни çине 200 килограмм кăна кăмрăк каять. Малтан çав продукцин кашни тонни çине 717 килограмм кирлĕ пулнă, хурçăн кашни тонни шăратнă çĕрте 20 килограмм мазут перекетленĕ. Лапин юлташăн çĕнĕвĕ çулталăкра 200 пин тенкĕ перекетлесе хăварма май парать.

Февралĕн 18-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Февралĕн 18-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем нимĕçсен фашистла войскисене хирĕç активлăн çапăçнă.

* * *

Кăнтăр-Хĕвеланăç фрончĕн участокĕсенчен пĕринче противник, пирĕн чаçсене хирĕç танксемпе автоматчиксене кĕртсе ярса, контратака тума хăтланнă. Совет боецĕсем тăшманăн танкĕсемпе автоматчикĕсене тĕл персе кĕтсе илнĕ, тăшманăн 4 танкне çĕмĕрнĕ тата нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 200 çынна çити пĕтерсе тăкнă. Противник пысăк çухатусем тӳссе каялла чакнă.

* * *

Красноармеецсен группи, Подкин лейтенант ертсе пынипе (Хĕвеланăç фрончĕ), противникăн çирĕпленсе ларнă вырăнне аякран пырса кĕнĕ те нимĕçсене Н. ялĕнчен хăваласа кăларнă. Противникăн 40 салтакĕ пĕтнĕ.

* * *

Тăшманăн 3 танкĕ позицисене атакăлама хăтланнă. Старши сержант Василий Андрушевăн оруди расчечĕ темиçе персех тăшманăн икĕ танкне пĕрин хыççăн тепĕрне çĕмĕрнĕ. 3-мĕш танкĕ каялла çавăрăнса тарнă.

* * *

Ленинград облаçĕнчи В. тата О. юлташсем ертсе пыракан партизансен пĕрлешнĕ отрячĕсем çĕрле нимĕçсен гарнизонĕ вырнаçнă халăх пурăнакан пункт çине пырса тапăннă. Партизансем противникăн огневой точкисене пусарса лартнă та штыксемпе тата гранатăсемпе гитлеровецсене кашни çуртран хăваласа кăларнă. Нимĕç офицерĕсемпе салтакĕсен пысăк ушкăнĕ тарма хăтланнă, анчах та засада çине пырса тăрăннă. Вĕсене вара пĕтĕмпех пĕтерсе тăкнă. Çĕрлехи çапăçу партизансем çĕнтерниpе вĕçленнĕ. Противникăн 20 офицерĕ тата 151 салтакĕ вилсе юлнă. Партизансем чылай трофейăсем: станковăй пулемет, 10 автомат, 46 винтовка, темиçе вуншар граната тата ытти тĕрлĕ хĕçпăшалсемпе çар пурлăхĕсем тытса илнĕ.

* * *

Нимĕçсен 123-мĕш пехотнăй дивизийĕн 418-мĕш полкĕнчи 7-мĕш ротăри обер-ефрейтор Фриц Брандт çапла каласа панă: «Вăрçă пуçланиччен пирĕн ротăра 260 салтакпа офицер пулнă. Халĕ стройра 70 çынтан ытла мар юлнă. Тăм илтернĕ тата чирленĕ 30 салтак лазаретра выртать. Пур салтаксем те ку таранччен çуллахи çĕтĕлсе пĕтнĕ çипуçпа çӳреççĕ. Нумайĕшсем çине пăхма та йĕрĕнмелле. Шинелĕсем çĕтĕлсе пĕтнĕ, тӳмисем çук. Кашни рота пуçнех темиçешер мăшăр «эрзац-çăматă», улăмран явса тунăскерсене, пачĕç. Çав «эрзац-çăматăсене» те поста каякан салтаксене кăна параççĕ».

* * *

Нимĕçсен ефрейторĕ Эрвин Губ çумĕнче вăл Берлина Герта Мак патне çырнă çыру тупнă. Губ çапла çырать: «Паян эпир каллех 5 çын пуçне пĕр çăкăр кăна илтĕмĕр. Çакă вăл салтаксене мар, çерçие тăранма кăна çитет».

* * *

Севастопольри Н-ски завод минăсем, гранатăсем тата ытти вăрçă хатĕрĕсем туса кăларассине чылай ӳстернĕ. Заводри стахановецсем Головин, Махотин, Хохлов, Сертученко, Волченко, Надежда Попельская юлташсем кашни кунах 5-шер норма тултараççĕ.

Тимĕрçĕ лаççи кунĕн-çĕрĕн ĕçлет

СЕНТĔР. «Моряк» колхозра каçхине Кольцовка колхозникĕсем хăйсен чĕнĕвĕнче хускатнă ыйтусене сӳтсе яврĕç. Тепĕр ирĕнче ирех колхозниксем хăйсене хушнă ĕçсене тума тытăнчĕç.

Колхоз тимĕрçи Алексей Краснов хăйĕн лаççине васкарĕ. Кольцовка колхозникĕсен чĕнĕвне сӳтсе явнăранпа ун лаççи пĕр кун та хупăнса тăмасть. Краснов юлташ кунĕн-çĕрĕн ĕçлет. Халь вăл 16 плуг, 5 сӳре, 2 сеялка юсаса лартрĕ.

Ытти колхозниксем те Краснов пекех Хĕрлĕ Çар кунĕ тĕлне çуракине пур енĕпе те хатĕрленсе çитессишĕн тăрăшса ĕçлеççĕ.

А. РАЗИН.

ВКП(б) Мускав Комитечĕн Пленумĕ

Февралĕн 16-мĕшĕнче ВКП(б) Мускав Область Комитечĕн пленумĕ пулса иртнĕ.

Пленум Мускав облаçĕнчи МТС-сем, колхозсемпе совхозсем çуракине хатĕрленни çинчен ĕççынни депутачĕсен область Совет исполкомĕн председателĕн П. С. Тарасов юлташăн докладне итленĕ.

ВКП(б) Мускав Комитечĕн пленумĕ çакна палăртнă: вăрçа пула, уйрăмах нимĕçсем оккупациленĕ районсенче, хăшпĕр йывăрлăхсем пулнă пулин те, Мускав облаçĕнчи колхозсемпе совхозсен, МТС-сен çак йывăрлăхĕсене çĕнтерме, çураки планне ăнăçлăн тултарма пур условисем те пур. Пленумра Малински, Шихневски, Константиновски, Каширски район руководителĕсене хытă критикленĕ. Çак районсем çуракине начар хатĕрленнĕ.

ВКП(б) Мускав Комитечĕн пленумĕ партипе совет организацийĕсене, МТС-семпе совхозсен политотделĕсене çуракине хатĕрленес ĕçри çитменлĕхсене çывăх вăхăтрах пĕтерме, план тăрăх тумалли ялхуçалăх ĕçĕсене пĕр пăркаланмасăрах туса пыма хушнă.

Пленумра ВКП(б) Мускав Область Комитечĕпе Мускав Хула Комитечĕн секретарĕ А. С. Щербаков юлташ сăмах тухса каланă. Хăйĕн сăмахĕнче вăл Мускав облаçĕнчи партипе совет организацийĕсем умне практикăллă задачăсем кăларса тăратнă. (ТАСС).

Отечественнăй аслă вăрçă фрончĕсенче

КРЕЩАНОВСКИЙ ЛЕЙТЕНАНТĂН ПАТТĂР ЭКИПАЖĔ

ХĔВЕЛАНАÇ ФРОНЧĔ, февралĕн 16-мĕш. **(ТАСС спецкорĕ).** Çĕрле пулса килнĕ, анчах çапăçу тин пуçланнă-ха. Пĕр яла пытанса ларнă тăшман урнă пек хирĕç тăнă, орудисенчен, минометсемпе пулеметсенчен питĕ вăйлăн пенĕ.

Лейтенант-орденоносец Крещановский, танкпа яла çĕмĕрсе кĕрсе кайса, тăшманăн огневой точкисене пĕтерсе тăкасси çинчен хăюллă решени йышăннă. Механик-водитель Карпов хăйĕн командирĕн шухăшне çур сăмахранах ăнланса илнĕ. Вăл шалти люка кăшт уçнă та тĕттĕм çĕре тинкерсе пăхса, мĕншур хăвăртлăхпа хăрушă çула тухса кайнă. Нимĕçсем пур енчен те танксене хирĕç пемелли орудисемпе пулеметсенчен сывăхранах питĕ вăйлăн пеме пуçланă. Снарядсем люк патнех, Карпов пуçĕ тĕррипех пыра-пыра тивнĕ.

— Сире нимĕн те пулăшас çук, мерзавецсем! — Паттăр водитель хаяррăн кăшкăрса хăйĕн машинине тӳрех нимĕçсен тупи патне илсе пынă. Йывăр танк пырса таптанипе вăл нимĕн йĕркисĕр металл купи пулса юлнă, анчах Карпов çак вăхăтра инçе кайнă. Вăл нимĕçсен танксене хирĕç пемелли иккĕмĕш тупи çине сулăмлăн пырса кĕрсе ăна лутăркаса хăварнă та малалла вĕçтерсе кайнă.

— Сылтăмра та, сулахайра зениткăсем! — тесе асăрхаттарнă Карпова командир.

Карпов тăшман зениткин ĕмĕлкине асăрхаса илнĕ, хăйĕн йывăр машинин мĕншур йывăрăшĕпе ун çине пырса кĕнĕ. Нимĕçсен тăваттăмĕш орудийĕ те çакăн пекех чыхăнса ларнă.

Ял варринче нимĕçсен боеприпассен склачĕ пулнă. Хăйĕн черетлĕ атакин объекчĕ вырăнне Карпов шăпах ăнтĕ çав склада суйласа илнĕ. Водителĕн ăста аллисене итлекен танк, çул çинче сапаланса пĕтнĕ фашистсен салтакĕсене гусеницăпа таптаса лутăркаса, мĕншур хăвăртлăхпа склад патнелле кăрлеттерсе пынă. Пынă çĕртех башня стрелокĕ склад çине снаряд хыççăн снаряд ăсатнă. Карпов танка çавăрнă та машинăна тăшманăн аркатмасăр юлнă хирĕç тăмалли вырăнĕсем патне илсе кайнă. Хыçра çав тери вăйлă взрыв сасси янăраса кайнă: тăшманăн боеприпассен склачĕ сывлăшалла сирпĕннĕ.

— Есть! — тесе кăшкăрнă Карпов командира. Хăвăртлăха чакармасăрах тăшманăн танксене хирĕç пемелли пиллĕкмĕш орудийĕ патне тапса сикнĕ. Çак вăхăтра нимĕçсен снарячĕ уçă люка пырса тивнĕ те бортри фракцион рычагне çĕмĕрсе татахнă. Мĕншур хăвăртлăхĕпе пыракан танк çунакан çурт çине пырса кĕнĕ. Стенасене шăтарса тухнă хыççăн машина хăйĕн хурçă корпусĕпе чĕтренсе илнĕ те чарăнса ларнă. Танкăн моторĕ ĕçлеме чарăннă. Танк çине çунакан пĕренесем ишĕле-ишĕле аннă...

Танк та, унăн экипажĕ те пĕтессĕн туйăннă. Анчах та паттăр танкистсем çухалса кайман. Ĕçе шутлă секундăсем татса панă — шăпах темиçе секунда хушшинче танк командирĕ Крещановский пăсăка тӳрлетнĕ те, мотора ĕçе ярса, машинăна вутран илсе тухнă.

Лейтенант-орденоносец Крещановский юлташ танкĕн экипажĕ хăюллă та татăклă ĕçсем тунипе пула нимĕçсен фашистла оккупанчĕсене тул çутăличчен чылай малтан ялтан çапса кăларнă.

И. ГРИБОВ.

Панченко красноармеец фашистсен штабне пĕтерсе тăкнă

КАЛИНИН ФРОНЧĔ, февралĕн 15-мĕш. **(ТАСС спецкорĕ).** Красноармеец Иван Панченко, çапăçура аманнă хыççăн сывалса çитсен, татах хăйĕн чаçне кайма тухнă, анчах йăнăшпа нимĕçсем йышăннă яла пырса кĕнĕ. Вăл пĕр пӳрте кĕрсе каять. Пӳрт хуçи—ватăрах хĕрарăм Панченкăна кӳршĕри пӳртре фашистсен штабĕ тăни çинчен систерсе: «Хăвăртрах тарăр, атту сире пĕтереççĕ», тенĕ.

«Эпир нимĕçсене ăçта тĕл пулнă, çавăнта çапса çĕмĕретпĕр»,—тесе ответленĕ Панченко. Винтовкăна алăра çирĕпрех тытса, Панченко нимĕçсен штабĕ вырнаçнă пӳрт патне пырса çитнĕ. Чӳречерен вăл сĕтел тавра пуçтарăнса ларнă фашистсем сĕтел çинчи карттăна пăхнине лайăххах курать. Панченко аллинчи винтовкăран персе ярать. Гитлеровецсем хăраса ӳкеççĕ. Вĕсем пĕрин хыççăн тепри пӳртрен чупа-чупа тухаççĕ. Паттăр красноармеец вĕсене пĕрин хыççăн тепĕрне пере-пере ӳкерет. Çапла вăл икĕ нимĕçе вĕлерет, виççĕшне амантать. Унтан вара, пӳртре никам та юлманнине кура, пӳрте кĕрет те штаб документчĕсене, унти ялава илсе тухать. Вĕлернĕ офицер çинчен «тимĕр хĕрес» орденне татса илет. Çавсене пурне те хăюллă Панченко хăйĕн чаçне илсе пырса парать.

Е. КОРЯВИЧЕВ.

Пирĕн боецсем тăшман хаяррăн хирĕç тăнине аркатса пыраççĕ

ХĔВЕЛАНАÇ ФРОНЧĔ, февралĕн 15-мĕш. **(ТАСС спецкорĕ).** Тихомиров юлташ командир пулса ертсе пыракан 80 красноармеец тăшманăн хаяр контратакине сирсе янă. Çав операцире вĕсем 150 нимĕçе пĕтерсе тăкнă, хăшне-пĕрне тыткăна илнĕ, вĕсен шутĕнче виçĕ ефрейтор, пĕр обер-ефрейтор тата тепĕр обер-лейтенант. Тихомиров аллине нумай трофейăсем лекнĕ: 56 винтовка, 8 пулемет, 2 радиостанци, 2 автомат тата ытти тĕрлĕ çар пурлăхĕ нумай.

Противникăн тылĕнче пулса иртнĕ çапăçусенчен пĕринче пирĕн разведчиксем: Мешалкин, Зиновьев, Авакумов, Куреев юлташсем пит те ăнăçлăн çапăçнă. Вĕсене нимĕç салтакĕсен группи çавăрса илсе тыткăна илесшĕн хăтланнă пулнă. Разведчиксем тарăн юр ăшне чавăланса кĕрсе выртнă та нимĕçсене хăйсем патне çывăхах янă, унтан пеме пуçланă. Нимĕçсен пĕтĕм группине çĕмĕрсе тăкнă, чĕрĕ юлнисем нимĕн йĕркисĕр каялла чакнă. Паттăр разведчиксем хăйсен чаçне пĕр сиенсĕр çитнĕ. Вĕсем командование противник çинчен пит те кирлĕ сведенисем панă тата пуян трофейăсем: 10 ручной пулемет, 2 миномет, 2 автомат, тĕрлĕрен пурлăх тиенĕ 3 лав хăйсемпе пĕрле илсе таврăннă.

И. ГРИБОВ.

Нимĕçсен боеприпассем тиенĕ икĕ поездне тытса илни

КАЛИНИН ФРОНЧĔ. Чакакан тăшмана пирĕн чаçсем вăйлăрах та вăйлăрах пыра-пыра çапаççĕ. Пĕр кун хушшинче, февралĕн 11-мĕшĕнче, 1.200 фашиста пĕтерсе тăкнă, 280 автомат тата боеприпассем тиенĕ 2 поезда тытса илнĕ.

Пирĕн чаçсемпе подразделенисем активлă çапăçусенче пысăк паттăрлăх, чăтăмлăх, тавçăрулăх кăтартаççĕ. Пирĕн боецсем, командирсемпе политработниксем, хăюллă та ăста çапăçса, ылханлă тăшмана нимĕн хĕрхенӳсĕр пĕтерсе пыраççĕ.

Лебедев юлташ комиссар пулса тăракан часть юлашки кунсем хушшинче урамри çапăçусенче нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсене 600 çынна çити пĕтерсе тăкнă. Артиллеристсен Н-ски чаçĕ пĕр çапăçура 60 нимĕçе вĕлерсе пĕтернĕ, тăшман артиллерин 3 батарейине, пулемет точкине пусарса лартнă. Н-ски стрелковăй чаçра старши сержант Гришин чапа тухнă. Вăл, питĕ ăста маскировка туса пытанса, кашни кунах нумай фашистсене стройран кăларать. Çапăçусем пуçланнăранпа Гришин юлташ сахал тата 70 фашиста пĕтерсе тăкнă.

(«Красная звезда» хаçатран).

14/1 Бук... 10/40

Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнине пысăк çитĕнусемпе кĕтсе илер!

Паттăр Хĕрлĕ Çар боецĕсем патне халăх парнесем ярать

КУКЕÇ. Февралĕн 17-мĕш. (Телефонпа). Нимĕç захватчикĕсене кунран кун вăйлăнрах çĕмĕрсе пыракан геройла Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флочĕн паттăр боецĕсем, командирĕсем тата политработникĕсем валли Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнă ятпа халăх ăшă кăмăлпа парнесем ярса парать. Районри колхозсенчен, учрежденисенчен парнесемпе пулли ещĕксем килсех тăраççĕ.

Ĕнер халăх леççе панă парнесен пĕр ушкăнне Çурçĕр-Хĕвеланăç фронтĕнчи боецсем патне ятăмăр. Çав посылкăсем хушшинче 1.100 килограмм тулă сухаринĕ, 144 килограмм типĕтнĕ аш-какайпа чăхсем, 24 килограмм шурă булкăсем, 13 килограмм печени, 7 килограмм çу, 3 килограмм махорка тата ытти вак япаласем пур.

«Строитель» колхоз членĕсем Хĕрлĕ Çар боецĕсем патне 93 килограмм тулă сухаринĕ, 17 килограмм типĕтнĕ сысна ашĕ; «Молния» колхоз членĕсем—135 килограмм сухари, 34 килограмм аш-какай, пĕçерсе типĕтнĕ 20 чăх ярса пачĕç. Çавăн пекех Иккассинчи «1-ое мая» колхозри колхозниксемпе колхозницăсем те фронтри боецсем патне 55 килограмм аш, 119 килограмм тулă сухаринĕ типĕтсе ячĕç, Самуккассинчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз членĕсем 14 килограмм аш-какай, 6 килограмм ытларах çу ярса пачĕç.

А. ГАЛКИНА.
ВКП(б) Шупашкар райкомĕн секретарĕ.

* * *

КАЛИНИНО. Кушар Юнтапари Каганович ячĕпе тăракан колхоз членĕсем Хĕрлĕ Çарăн мухтавлă воинĕсем патне уяв ячĕпе 10 посылка ячĕç. Посылкăсем ăшне колхозниксем 55 килограмм сухари, 6 килограмм çу, 20 килограмм ытла махорка тата ытти çимĕçсемпе куллен кирлĕ япаласем хучĕç.

М. МИХАЙЛОВ.

Фронтовиксем валли ăшă тумтир пухас ĕçе пурте активлăн хутшăнаç

ÇĔРПУ. Паттăр Хĕрлĕ Çарăн фронтри çитĕнĕвĕсемпе хавхаланса, районри колхозниксемпе колхозницăсем фронтра геройла çапăçакан боецсем валли ăшă тумтирсем пухас ĕçе кунран кун вăйлатса пыраççĕ. Февраль уйăхĕнче Рындинăри «Новая жизнь» колхоз членĕсем районри комиссин складне 76 тир, 15 мăшăр алшиш, 11 мăшăр носки, 9 алшăлли леççе пачĕç. Çавăн пекех «Елаш», «Пионер» колхозсенчен те ăшă тумтирсемпе левсем килчĕç.

Г. П.

* * *

ЭЛЕК. Орбашри «Хастар» колхоз членĕсем февраль уйăхне кĕнĕкенпе Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли пĕр мăшăр çăматă, 3 мăшăр çăм носки, 7 мăшăр алшиш, çĕлĕк, 14 килограмм ытла çăм, 15 тир пухса пачĕç.

И. ЕВДОКИМОВ.

* * *

ИШЛЕЙ. Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă тумтирсем пухас ĕçе кашни колхозрах пĕр вăйсăрлатмасăр туса пыраççĕ. Ярапайкасси, Чурачăк, Тăрăн, Сăлай тата ытти ялсовечĕсене кĕрекен колхозсенче ку ĕçе тепĕр хут пуçарса ячĕç. Ăшă тумтирсем пухас ĕç çине колхозниксем ялан туса пыма кирлĕ паха ĕç çине пăхнă пек пăхаççĕ. Ялсовечĕсенчи агитколлективсем ăнлантарулла ĕçе вăйлатнă хыççăн уйрăмах Ярапайкасси, Тăрăн, Анат-Кĕнер, Ишлей-Покровски ялсовечĕсенчи колхозсенче ăшă тумтирсем нумай пухрĕç. Сăмахран, Доронин ячĕпе тăракан колхозра Молотов юлташăн нотине ăнлантарса панă хыççăнах колхозниксем 14 тир, 1,5 килограмм çăм панă. Анат-Кĕнер вăтам шкулĕнчи учительсем тата аслă классенче вĕренекенсем агитацилле-массăллă ĕçе активлăн хутшăнаççĕ. Уйрăмах Т. Малышев учитель, хăйĕн ватлăхне пăхмасăрах, колхозниксен килĕсене çÿресе ăнлантарулла ĕçе тимлĕн тăвать. Çак кунсенче «Активист» колхозра вăл ăнлантарса панă хыççăн колхозниксем 17 килограмм çăм, 8 тир тата 50 тенкĕ укçан пухнă. Тăрăн ялсоветĕнчи «МОПР» колхоз та Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли 43 тир, 3 килограмм çăм, 4 мулаххай, 4 мăшăр алшиш пухса панă. Р. Прокопьев колхозник малтанхи пекех 2 тир, 1 мулаххай тата алшăлли панă.

С. ГОРЛАНОВ.

* * *

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. Мăн Шетмĕ вăтам шкулĕнче вĕренекен çамрăксем Хĕрлĕ Çар валли ăшă тумтирсем пухса хатĕрлес ĕçе активлăн хутшăнаççĕ. 9-мĕш класра вĕренекенсем иртнĕ уйăхра 23 тир, 8 килограмм çăм, 2 çĕлĕк, 3 мăшăр алшиш пухса пачĕç. Вĕренекен хĕрачасем çăмран боецсем валли алшишсем çыхма тытăннă.

Вăтам шкул Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли пурĕ 34 тир, 12 мăшăр алшиш, 8 çĕлĕк, 19 килограмм çăм тата ăшă япаласем илме 150 тенкĕ укçа пухнă. Комсомолец М. Иванов хăй пĕччен пĕр тир, çур килограмм çăм панă.

М. ГЕРАСИМОВ.

* * *

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. Мартынкино ялсоветне кĕрекен колхозсенче Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă тумтирсем пухас ĕçре активистсем пример кăтартса пыраççĕ. Çапла, «Красный Восток» колхоз председателĕ Филиппов юлташ çĕнĕрен 5 тир, «Чăваш Коммуни» колхоз председателĕ Кузьмин юлташ пĕр мăшăр çăматă, «Звезда» колхоз председателĕ Семенов юлташ пĕр ăшă кĕпе, пĕр тир панă.

Дубовкăри «Красная звезда» колхоз членĕсем Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă тумтирсем туна: И. Трофимов—2 килограмм çăм, пĕр тир; С. Ефимов—2 килограмм çăм, 2 тир; Н. Филиппов—3 килограмм çăм панă.

Я. НИКИТИН.

Машинăсен пайĕсемпе инструментсене пухатпăр

Сталинград облаçĕнчи комсомолецсемпе çамрăксем машина пайĕсемпе инструментсем, металсем пухас тĕлĕшпе паха пуçару турĕç. Çак паха ĕç Ишлей районĕнче анлăн сарăлса кайрĕ. Комсомолăн чылай организацийĕсем ку тĕлĕшпе сахал мар усăллă ĕçсем турĕç. Вăрçă вăхăтĕнче тирпейлĕх, перекетлĕх уйрăмăнах пысăк вырăн йышăнса тăнине, тăван çĕршывшăн кашни пĕчĕк гайка, кашни винт хаклăшне, çавсем пурте машинăсене кĕске вăхăтра юсаса ĕçе яма пулăшнине кунти чылай организацисем ăнланса илнĕ. Ку ĕçе комсомолецсем кăна мар, союзра тăман çамрăксем, шкул ачисемпе пионерсем те хутшăнса паха тĕслĕхсем кăтартаççĕ.

Çак кунсенче Микерти «Победа» колхозри комсомолецсен пуçарăвĕпе союзра тăман çамрăксен пухăвĕ пулса иртрĕ. Унта çамрăксем усă курмасăр выртакан машинăсене тата вĕсен юсама май килекен кивĕ пайĕсене тупса пуçтарас тĕлĕшпе 4 çынтан бригада туса хăварчĕç. Çав кунах, комсомолец Александр Янчиков ертсе пынипе, бригадăри çамрăксем хастаррăн ĕçе тытăнчĕç.

Комсомолецсемпе çамрăксем колхоз правленине пырса кĕнĕ. Вĕсем хăйсем пухура мĕн-мĕн тума палăртса хăварни çинчен правление каласа панă. Колхоз председателĕ Смирнов юлташ çамрăксем çине кăмăллăн пăхнă, вĕсем усăллă та кирлĕ ĕç тума шутланине ăнланнă, çамрăксене ĕçре пулăшу пама пулнă. Акă ĕнтĕ çамрăксем ĕçлеме те пуçланă.

— Астăвăр-ха,—тенĕ колхоз председателĕ,—ферма килкартинчи сарайĕнче машина пайĕсем сахал мар выртаççĕ пирĕн. Анчах унта сарайне кĕмелле мар юр хывса лартнă. Эпир ун çинчен халичченех шухăшласа пăхман-ха. Сирĕн ĕçлеме тивет.

— Алтрамăпăр!—хăрăссăн ответленĕ çамрăксем. Кĕске вăхăтрах вĕсем алăсене кĕреçесем тытса ĕçе кÿлĕннĕ.

Ĕçлени харама кайман. Тăрăн юр айĕнчен темиçе çул хушши ĕçре усă курмасăр выртнă 19 плуга, уйрăм çĕрте выртакан плугсен 12 кустăрмине туртса кăларнă. Икĕ касăллă 6 плуга тимĕрçе юсама леçнĕ. Çавăнтах сапаланса выртакан винтсемпе гайкăсене, сложнăй молотилкăн кирлĕ пайне, урапа кустăрмисем валли 6 шина тупса шута илнĕ. Ферма килкартишĕнчех çамрăксем ĕçре юрăхсăра тухнă тесе шутланă соломорезкăна, молотилкăн икĕ кустăрмине юр айĕнчен тупса пĕр çĕре хунă.

Районри шкулсенчи комсомолецсем тата пионерсемпе шкул ачисем те тракторсене, ялхуçалăх машинисене юсанă çĕрте кирлĕ пулакан, складсенче усă курмасăр выртакан машина пайĕсене, инструментсене, металсене тупса пуçтарас тĕлĕшпе бригадăсем туса йĕркелерĕç.

Акрамовăри туллимар вăтам шкулта 10-шар ачаран 5 бригада туса, вĕсене кашниннех колхозсем çумне çирĕплетнĕ. «Самолет» колхоз çумне çирĕплетнĕ шкул ачисен бригади (бригадирĕ 7-мĕш класра вĕренекен А. Тимофеев), «Танк» колхоз çумне çирĕплетнĕ Владимир Федоров ертсе пыракан бригада пĕр кун хушшинче 30 гайка, 20 винт, 2 плуг кустăрми, 3 плуг касси, 5 килограмм хурçă, 2 килограмм пăхăр, 3 зубило, гайкăсем пăрса кăлармалли 4 усă пухнă. Çавăн пекех Тăрăнти туллимар вăтам шкулта 7 бригада, Ярапайкассинчи туллимар вăтам шкулта 5 бригада ĕçлеççĕ.

А. МИХАЙЛОВ.

Хĕрлĕ Çар валли выльăхсем ытларах самăртар

Пирĕн колхозниксемпе колхозницăсем фронтпа çĕршыв валли ялхуçалăх продукчĕсем сахал мар туса пачĕç. Халăхсен аслă çулпуçĕ Сталин юлташ фронт интересĕсемшĕн татах та ытларах ялхуçалăх продукчĕсем туса пама чĕнни çине ответлесе, Çĕрпÿ районĕнчи «Цивильстрой» колхозри колхозниксем кашни хăйсен хуçалăхĕсенче пĕрер выльăх çитĕнтерсе самăртма пулчĕç, хăйсем пек тума республикăри пур колхозниксене те чĕнчĕç.

«Цивильстрой» колхоз колхозникĕсен паха пуçарăвĕ пирĕн республикăри колхозниксемпе колхозницăсем хушшинче анлă сарăлса кайрĕ. Колхозниксемпе колхозницăсем хăйсен хуçалăхĕсенче Хĕрлĕ Çар валли ятарласах пиншер выльăхсем çитĕнтерсе самăртма тытăнчĕç. «Путь Ильича» колхозри колхозниксем (Чкаловски р.) хăйсен хуçалăхĕсенче 13 пуç сысна, 9 сурăх, 23 хур çитĕнтерсе самăртма пулчĕç. Кувакино районĕнчи «Красный партизан» колхозри колхозниксем Хĕрлĕ Çар валли 118 сурăх, 25 сысна, 50 чăх çитĕнтерсе самăртаççĕ. Унсăр пуçне вĕсем оборона фондне 17 килограмм çу, 335 литр сĕт, 3600 çăмарта пачĕç. Çавăн пекех «Гигант» колхоз членĕсем те (Вăрнар районĕ) 15 сысна, 2 вăкăр тата 100 центнер тырă, 30 центнер çĕрулми, 50 килограмм çу оборона фондне пачĕç. Чкалов ячĕпе тăракан колхозри (Шупашкар районĕ) Николаева колхозница Хĕрлĕ Çар валли пĕр сурăх, Тимофеев колхозник пĕр така самăртаççĕ.

Туллимар сведенисем тăрăх, пирĕн колхозниксемпе колхозницăсем Хĕрлĕ Çар валли пĕтĕм республикипе 370 пуç мăйракаллă выльăх, 2418 сурăх, 1611 сысна тата 17.687 кайăк-кĕшĕк çитĕнтереççĕ.

Çав паха та чыслă ĕç уйрăмах Шăхасан районĕнчи колхозниксем хушшинче анлăн сарăлса кайрĕ. Шăхасан районĕнчи колхозсенче халĕ мĕнпурĕ 100 пуç мăйракаллă выльăх, 500 сысна, 150 сурăх, 1000 чăх-чĕп çитĕнтерсе самăртаççĕ.

Çапах та çак ĕç пур колхозсенче те тивĕçлĕ пек пулса пымасть-ха. Чылай колхозсенче «Цивильстрой» колхозникĕсен чĕнĕвĕ çинчен калаçам пек турĕç те кайран ун çинчен пачах манчĕç. Канаш районĕнче чылай колхозсенче «Цивильстрой» колхозникĕсен чĕнĕвне сÿтсе те явман, нумай колхозниксем ун çинчен пĕлмеççĕ те. Çавăн пиркиех унта Хĕрлĕ Çар валли колхозниксен хуçалăхĕсенче выльăхсем самăртас ĕç çителĕксĕр пулса пырать. Пĕтĕм районĕпе те кунта 3 пуç мăйракаллă выльăх, 3 сысна, 22 сурăх тата 123 чăх-чĕп кăна çитĕнтерсе самăртаççĕ.

Хĕрлĕ Çар валли выльăхсем çитĕнтерсе самăртма пирĕн пур условисем те пур. Тĕслĕхрен Шăхасанпа Канаш районĕсенех илсе пăхма пулать. Çакă кÿршĕллĕ икĕ район пĕр-пĕринчен нихăш енĕпе те уйăрăлса тăмаççĕ. Пĕтĕм уйрăмлăх та—Шăхасан районĕнче Хĕрлĕ Çар валли выльăхсем çитĕнтерсе самăртас ĕçе куллен тата çине тăрса туса пынинче çеç. Апла пулсан, мĕншĕн Канаш районĕ Шăхасан районĕ пек ĕçлеме пултараймасть?

Пултарать, пултармалла та! «Цивильстрой» колхоз колхозникĕсен пуçаруне колхозниксем хушшинче анлăн сарса, ăна куллен туса пымалла, парти райкомĕсемпе райисполкомсен ку ĕçе тивĕçлĕн ертсе пымалла.

Çапла эпир Хĕрлĕ Çара татах та пысăкрах çитĕнÿсем тума пулăшăпăр, хамăрăн тăван çĕршыва нимĕç оккупанчĕсенчен хăвăртрах тасатса çитерĕпĕр.

А. МИТРОФАНОВА.
ВКП(б) Обкомĕн ялхуçалăх отделĕн заведующийĕн заместителĕ.

Чаплă пуçарăва хакламаççĕ

КАНАШ. (Хамăр корр.). Çĕрпÿ районĕнчи «Цивильстрой» колхоз членĕсен чĕнĕвне Шаккăлти «Искра» колхозра сÿтсе-явнă хыççăн колхозниксем хăйсем те Хĕрлĕ Çар валли пĕрер выльăх ÿстерсе самăртма пулнă. Ку колхозра халь пурĕ 62 хур, 13 чăх, 7 сурăх, 1 пăру самăртма тытăнчĕç. Кунсăр пуçне колхоз хăй тата 2 ĕне самăртать.

Анчах районра «Цивильстрой» колхоз членĕсен паха пуçарăвне хакламан колхозсем те чылай. Ямаккассинчи Доронин ячĕпе тăракан колхозра çак ыйтăва ячĕшĕн çеç сÿтсе-явнă. Колхозниксем хăйсен хуçалăхĕсенче выльăхсем ÿстерсе самăртас тĕлĕшпе татăклă обязательствăсем илмен. Колхозри фермăран 5 сурăх уйăрса илсе Хĕрлĕ Çар валли самăртас тесе йышăнса хăварни те хут çинче çеç тăрса юлчĕ.

«Амăрту», «Иккĕмĕш пятилетка» тата «Хĕрлĕ ялав» колхозсенче вара ку тĕлĕшпе нимĕн те туман. Çав колхозсенче колхозниксем мар, правлени председателĕсем хăйсем те «Цивильстрой» колхоз членĕсен чĕнĕвĕ çинчен пĕлмеççĕ.

— Вăл чĕнÿ Хĕрлĕ Çар валли ăшă тумтирсем лайăхрах хатĕрлесе парасси çинчен пулас, — тет «Хĕрлĕ ялав» колхоз председателĕ Ефремов юлташ.

«Цивильстрой» колхоз членĕсен пуçарăвĕ — Сталин юлташ фронта тырпул, аш-какай ытларах та ытларах парса тăрар тесе чĕннине лайăхрах пурнăçлама пулăшакан пуçару. Ахальрен мар ВКП(б) Чăваш Обкомĕн бюровĕ парти райкомĕсен секретарĕсене тата районсовет исполкомĕсен председателĕсене çак пуçару çинчен колхозниксене тата пĕтĕм ĕççынниссене анлăн ăнлантарса пама хушнă. Анчах Канаш районĕнчи партипе совет оргăнĕсен руководителĕсем ВКП(б) Обкомĕн кăтартăвне кирлĕ пек пурнăçламаççĕ. Вĕсем «Цивильстрой» колхоз членĕсен пуçарăвĕ çинчен колхоз председателĕсен канашлăвĕнче пĕр хут калаçса илчĕç те кайран ăна пачах манса хăварчĕç. Халĕ ку ĕçе парти райкомĕ те, райсовет исполкомĕ те ертсе пымасть.

Т. ИВАНОВ.

Финанс ĕçĕнчи отличниксем

Финанс ĕçĕнче ĕçлекенсем Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнă ятпа социализмлă ăмăртăва тухрĕç. Вĕсем 1942 çулти пĕрремĕш квартал планне февралĕн 23-мĕш тĕлне 90 процент тултарма обязательство илчĕç. Халĕ вĕсенчен нумайăшĕсем хăйсен обязательствисене пурнăçларĕç те ĕнтĕ.

Кызыл-Чишма ялсоветĕнчи (Чкаловски район) налог агенчĕ Валиулин юлташ 1942 çулти пĕрремĕш кварталăн финпланне 285 процент тултарнă, вăрçă вăхăтĕнчи налога та çуррине пухнă.

Чăваш-Ишак ялсоветĕнчи (ялсовет председателĕ Харитонова юлташ) налог агенчĕ Волков юлташ пĕрремĕш квартал планне 174 процент тултарнă, вăрçă вăхăтĕнчи налога—33,4 процент пухнă. Ку ялсовечĕсенчи налог агенчĕсене бюджет комиссийĕсем пулăшаççĕ.

Чкаловски район пĕтĕмĕшпе пĕрремĕш кварталăн финанс планне февралĕн 10-мĕш тĕлне 62 процент тултарнă.

Элĕк районĕнчи Ехремкасси ялсоветĕн налог агенчĕ Кузнецова юлташ пĕрремĕш кварталти финплана 102,6 процент тултарнă, вăрçă вăхăтĕнчи налога 40 процент пухнă. Кузнецова юлташ Хĕрлĕ Çара кайнă агент вырăнне ĕçлеме кĕнĕ, 1941 çулти сентябрь уйăхĕнчен пуçласа кăна ĕçлет. Çапах та вăл иртнĕ çулти 4-мĕш кварталăн планне ытлашшипех тултарнă.

Октябрьски районри Кивĕ Асташево ялсоветĕнчи налог агенчĕ Иванов юлташ та 1-мĕш кварталăн финпланне 107 процент тултарнă. Ĕçре ăна ялсовет председателĕ Семенова юлташ пулăшать. Вĕсен ялсовечĕ укçа пухас тĕлĕшпе кашни кварталтах районра малти вырăна йышăнать.

Октябрьски район финплана пурĕ 67 процент тултарнă.

Пăрачкав ялсоветĕнчи (Пăрачкав р.) налог агенчĕ Панов юлташ та начар мар ĕçлет. Вăл плана 95,4 процент тултарнă.

Финанс ĕçĕнчи отличниксем республикăра çĕршерĕн шутланаççĕ. Çапах вăл хисеп çителĕксĕр-ха. Социализмлă ăмăртăва анлăн сарса, отличниксемпе ударниксен йышне татах та ÿстермелле. Финплана малта пыракан уйрăм ялсоветĕсем кăна мар, кашни ялсоветĕ, кашни район тултартăр; республикипе вара 1-мĕш квартал планне 90 процентран кая мар тултармалла пултăр.

Социализмлă ăмăртăва анлăн сарса, ĕçри отличниксемпе ударниксен йышне ÿстерес тĕлĕшпе профсоюз организацийĕсен: финанспа банк работникĕсен вырăнти тата районри комитечĕсен ытларах ĕçлемелле. Вĕсен финанс работникĕсем хăйсен обязательствисене мĕнле пурнăçласа пынине асăрхаса пымалла, укçа пухас ĕçре агентсене пулăшмалла. Социализмлă ăмăрту договорĕсене тĕрĕсленĕ хыççăн итогсене производствăллă канашлусенче сÿтсе-явмалла. Унта отличниксен ĕçри опычĕсем тăрăх çамрăк кадрсене вĕрентессине йĕркелемелле.

Социализмлă ăмăрту урлă çамрăк кадрсене воспитани парас тĕлĕшпе Чкаловски районри финанспа банк работникĕсен союзĕн райком председателĕ Хохлов, Ишлей райкомĕн—Одеряков юлташсем аван ĕçленине палăртмалла. Вĕсем 1941 çулти финплана тултарас тĕлĕшпе тунă договорсене тĕрĕсленĕ. Тĕрĕслÿ итогĕсене союз райкомĕсен ларăвĕсенче сÿтсе-явнă, отличниксемпе ударниксене палăртнă, вĕсен опычĕсене финанс ĕçĕнчи ытти работниксене пама тăрăшнă. Çĕнĕрен договорсем тунă. Ку тĕлĕшпе союзăн Çĕрпÿ райком председателĕ Левин юлташ та начар мар ĕçлет.

Анчах хăшпĕр райкомсен председателĕсем (сăмахран Сĕнтĕрвăрринчи—Виноградов, Шупашкар районĕнчи—Алексеев юлташсем) профсоюз ĕçĕ çине çителĕклĕ таран çаврăнса пăхмаççĕ. Вĕсем профактива, союз членĕсене производствăра кăтартуллă ĕçлеме чĕнмеççĕ, çĕнĕ кадрсене воспитани парас тĕлĕшпе ĕçлемеççĕ.

Финанспа банк работникĕсен задачи—союз членĕсем хушшинче политикăллă-массăллă ĕçе анлăн сарасси, Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнă тĕле илнĕ обязательствăсене пурнăçласси, ĕçри отличниксен йышне ÿстересси пулса тăрать. Çав задачăсене пурнăçлассишĕн пĕтĕм вăя хурса кĕрешер.

Е. КАЛИНОВСКАЯ.
Финанспа банк работникĕсен Союзĕн Обком председателĕ.

„Эпир малашнехишĕн шикленетпĕр“

Германи хаçачĕ йышăнни

СТОКГОЛЬМ, февралĕн 17-мĕш. (ТАСС). Нимĕçсен «Гамбургер фремденблатт» хаçатĕнче Германи çарĕн лейтенанчĕн Блютăн статьине пичетлесе кăларнă. Çав статьяра вăл Совет Союзĕпе Германи хушшинчи вăрçă фронтĕнчи çапăçусенчен пĕрин çинчен çырса кăтартнă: «Эпир малашнехишĕн питĕ шикленетпĕр, — тесе çырать Блют.— Пирĕн çухатусем питĕ пысăк. Салтаксем пурте халран кайнă. Пирĕн малти позицисенчи отрядсем питĕ сайралса юлнă. Тамăк ирхине пуçланать те кун каçах пырать. Пире совет войскисем атакăлаççĕ. Кăнтăрла тĕлнелле сылтăм флангри вăйсем пĕтсе пыраççĕ. Совет миномечĕсем, вĕсен танкĕсене хирĕç пемелли тупписемпе йывăр орудийĕсем пире пысăк çухатусем кÿчĕç. Позицире чĕрĕ юлнă салтаксем штаб патнелле чакаççĕ. Пирĕн позици 600 метр тăршшĕ çаралса юлать. Эпир унта резерври чаçсене яма пултараймастпăр, мĕншĕн тесен пирĕн хамăрăн резервпа сыхăну çук. Резервсем патне кайма тăрăшакан пирĕн посыльнăйсем пирĕн куç умĕнчех пĕрин хыççăн тепри тĕршĕне-тĕршĕне анаççĕ. Позицире питĕ сахаллăн юлаççĕ. Вĕсен тылпа çыхăну çук. Ыран ирхине татах çак тамăках пуçланать».

Украинецсем нимĕçсен „кăмăлне хуçнă“

СТОКГОЛЬМ, февралĕн 17-мĕш. «Кранацер цейтунг» хаçатăн ирĕксĕрех Украина ССР-ĕн нимĕçсем вăхăтлăха оккупациленĕ районĕсенче Гитлер каннибалĕсене пурăнма май çук условисем туса хуни çинчен йышăнма тивет. «Украина халăхĕ хăйне хăй тыткаланин, — тесе çырать хаçат, — пирĕн кăмăла хуçрĕ. Германи влаçĕсем хытă приказ памасăр та украинецсем нимĕн те тумаççĕ». Малалла хаçат çапла çырать: хăшпĕр уйрăм тĕслĕхсене шута илмесен, гитлеровецсен «бургомистр» вырăнне йышăнма килĕшекен çынсем тупма май килмен пирки «бургомистра» лартма Германирен полици чиновникĕсене илсе килме тивет.

Югослави партизанĕсен кĕрешĕвĕ

ЛОНДОН, февралĕн 17-мĕш. (ТАСС). «Дейли телеграф энд морнинг пост» хаçатăн Стамбулри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, Югослави партизанĕсем нимĕç оккупанчĕсене хирĕç Лебане хули таврашĕнче (Нишран 30 миля кăнтăр еннерех) 48 сехет хушши çапăçнă. Çав çапăçура нимĕçсем 180 çын çухатнă.

Югославин кăнтăр тата кăнтăр-хĕвел-тухăç пайĕсенче те партизанла движени вăйланса пыни палăрать.

Темиçе кун каярах партизансен вăйлă отрячĕ Белград—Ниш чугунçулĕ çинчи Бела Паланка çывăхĕнче нимĕçсен çар поезчĕ çине тапăннă. Поезда чылай пысăк сиен кÿнĕ. Чугунçул линине аркатса тăкнă. Нишран уйрăм отряд ярса çула юсанă хыççăн тин поезд малалла кайма пултарнă.

Польшăри еврей халăхĕ вилсе пĕтес шăпа умĕнче тăрать

СТАМБУЛ, февралĕн 17-мĕш. (ТАСС). Стамбулра ĕçлесе тăракан ютçĕршыв учрежденийĕсенчи авторитетлă çынсем çапла калаççĕ: гитлеровецсем Польшăра еврейсем валли тунă геттосенчи çынсем уйăхран уйăха ытларах та ытларах вилме пуçланă. Нумай геттосене, сăмахран каласан, Варшавăра, Люблинра, 1941 çулти кĕркуннерен пуçласа продовольстви тăратма пăрахнăпа пĕрех. Çынсем помойăпа пĕрле тухса тăкакан тĕрлĕ татăк-кĕсĕксене пуçтарса çинипе çеç пурăнаççĕ. Шартлама сивĕсем чухне те еврейсем хулнă геттосем валли çĕркăмрăкĕпе вутă пачах памаççĕ. Çынсем шăнса вилни тем чухлех пулнă, сивĕпе пуринчен ытла пĕчĕк ачасем пĕтеççĕ. Ютçĕршывсен кунти учрежденийĕсен çакăн пек тĕрĕс даннăйсем пур: Варшавăри геттора кунсерен çĕршер çын пĕтет. Нимĕçсен фашистла ирсĕрсен тĕллевĕ: Польшăри еврей халăхне вĕлерсе пĕтересси. Çав учрежденисемех илнĕ сведенисем тăрăх, Ломжа хули çывăхĕнче гитлеровецсем ирĕксĕр ĕçлеттерме пухнă 6 пин еврей çыннине пулемётсенчен персе вĕлерсе пĕтернĕ. Яслора 600 еврей çыннине персе пăрахнă, вăл шутра хĕрарăмсемпе пĕчĕк ачасем те нумай.

Павелич вотчининчи халăх асапланни

СТАМБУЛ, февралĕн 15-мĕш. (ТАСС). Гитлер аллинчи «Хорват государстви» продовольстви тĕлĕшпе пысăк йывăрлăхсем тÿсет. Ку çĕршыва нимĕçсем, хăйсене Павелич шайкисем пулăшса тăнипе, тĕппипех çаратса вылăха хăварма ĕлкĕрнĕ ĕнтĕ. Çĕршывра туса кăларакан ĕçме-çимелли продуктсем çав тери япăх. «Хорватски народ» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, çăкăра 50 процентран кая мар тĕрлĕрен суррогатсем, пуринчен ытла кукуруза, хупса пĕçереççĕ. Нимĕçсен «Тюркише пост» хаçачĕ пĕлтернĕ тăрăх, хорватсен суту-илÿ «министерстви» нумаях пулмасть, продовольстви çав тери çителĕксĕр пирки, Загреб хулине урăх вырăнсенчен пынă çынсене продуктсем парса тăма чарасси çинчен асăрхаттарнă. Çав хаçатра кăтартнă тăрăхах, 1941 çулхи апрелĕн 10-мĕшĕнчен пуçласа Загреба Югославин ытти районĕсенчен 80 пин çын ытла куçса пынă. Продуктсем паманнипе ĕнтĕ çав çынсен выçă вилмелле пулать.

«Донау цейтунг» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Хорват королевствинче нумаях пулмасть выльăх-чĕрлĕх переписне туса ирттернĕ. Перепис кăтартса панипе кашни хуçалăх пуçне тивекен выльăх-чĕрлĕх тăрăх шутласан, халĕхи вăхăтра Хорватия Европăра чи кайри вырăнта тăрать.

Греци халăхĕ асапланни

СТАМБУЛ, февралĕн 16-мĕш. (ТАСС). «Ени сабах» хаçат Грецирен килнĕ сутуçăсем каласа панине пичетлесе кăларнă. Грецире кашни кунах выçăпа пиншер çынсем вилеççĕ,—тесе çыраççĕ вĕсем.—Пур тĕрлĕ продуктсем те калама çук хаклă. Темиçе уйăх хушши грексем лаша какайĕпе ашак какайĕ çисе пурăннă, халĕ ĕнтĕ вĕсем те çук. Халĕ кушаксемпе йытăсене пусса çиеççĕ, анчах вĕсене те кунта пĕтĕмпех тенĕ пек тытса пĕтернĕ. Грецире вутăпа кăмрăк тупма çук. Пĕр килограмм çапă 30 драхма тăрать. Çĕршывра пĕр ресторан та юлман. Вĕсем пурте оккупантсен аллине куçнă та, халĕ унта хăйсем çеç апатланма пултараççĕ. Афинăра нимĕнле транспорт средствисем те юлман. Трамвайсемпе автомобильсем нумайранпа çÿремеççĕ. Багажсене çынсем пĕчĕк урапасемпе турттарса çÿреççĕ. Урамсенче час-часах çÿп-çап пухмалли лавсене курма пулать. Çав лавсемпе вилнĕ çынсене турттарса каяççĕ».

АНКАРА, февралĕн 17-мĕш. (ТАСС). Анатолийски агентство «Журналь де Женев» хаçатра пичетленнĕ çакнашкал çыру çинчен пĕлтерет: «Афинăри пурнăçа курсан чĕре тÿсме çук ыратать. Хула урамĕсенче эсир выçă пуранса ырханланса кайнă çынсене çеç куратăр. Халăх тÿсекен асап çинчен каласа пама сăмах та çитмест. Урамсенче кашни утăмрах çын вилнисем йăваланса выртаççĕ. Юлашки эрнере кăна пĕр Афины хулинчех 2.000 çын вилнĕ. Хăçанччен пырĕç-ши çак тÿсме çук йывăр асапсем! Кăçалхи хĕл калама çук сивĕ пулчĕ, халăхăн кăмрăк та, вутă та, краççин та çук.

Çынсене çăкăр 30-шар грамм çеç параççĕ, анчах чылай чухне вăл та пулмасть. «Шухăшласа пăхма хăрушă, мĕн пулĕ пирĕн халăхпа,—тенĕ çырăвăн вĕçĕнче.—Анчах эпир çапах та тÿссе ирттерĕпĕр, хамăр вăя сыхласа усрăпăр, тăшмана таврăпăр».

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ЧУВАШСКАЯ КОНТОРА „ГЛАВКИНОПРОКАТ“
получила и выпускает на экраны Республики новый звуковой художественный фильм
„БОЕВОЙ КИНО-СБОРНИК № 8“
Программа сборника составлена из 2-х новелл:
„НОЧЬ НАД БЕЛГРАДОМ“ И „ТРИ ТАНКИСТА“
Постановка лауреата Сталинской премии режиссера Л. ЛУКОВА.
В главных ролях: Заслужен. арт. республики АБДУЛОВ. Орденоносцы—НОВОСЕЛЬЦЕВ и КАЗАКОВ, арт. ЗАЙЧИКОВ, АЛЕЙНИКОВ, ОКУНЕВСКАЯ.
Вместе со сборником идут кино-журналы выпуска Куйбышевской кино-студии: № № 112 и 113 1941 г. и № 1 1942 г.
В журналах— репортаж с фронта отечественной войны.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн—4—26, пропагандăпа парти пурнăç пайĕн — 5—31, ялхуçалăх пайĕн — 3—99, «Ленин çулĕпе» журналăн тата комсомол пурнăç пайĕн — 0—85, издательство конторин — 0—23.

НТ 380 Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 260. Ф. 6. 58 64 п: л: